# ЭКСКУРСИЕ ШУПАШКАРА

**Кӗркунне шкул ачисем ҫӗр улми пуҫтарчӗҫ. Чи ӗҫченнисене хӗллехи каникулта парне кӗтрӗ.**

Эпир кӑрлачӑн 10-мӗшӗнче хулана экскурсие кайрӑмӑр. Чи малтанах эпир Чапаев музейне ҫитрӗмӗр. Чи малтан палӑкӗ умӗнче чарӑнса тӑтӑмӑр. Музейра Чапаевпа ҫыхӑннӑ япаласем — шашки те, бурки те. Уйрӑмах пире тачанка тӗлӗнтерчӗ. Эпир Чапаев пурӑннӑ пӳрте те кӗрсе тухрӑмӑр. Унӑн ҫемйи пирки нумай вуласа пӗлтӗмӗр.

Чапаев музейӗ хыҫҫӑн эпир Ҫӗнтерӳ Паркӗнче пултӑмӑр. Кунта ҫар техникипе паллашрӑмӑр, вертолетпа танк умӗнче фото ӳкрӗмӗр. Ӗмӗр ҫунакан ҫулӑм умӗнче те тӑтӑмӑр. Юнашар вара Вӑрҫӑра пуҫ хунӑ геройсене лартнӑ палӑк.

Кунтан Шупашкар кӳлмекӗ, порт тата Атӑл илемлӗн курӑнса лараҫҫӗ.

Чӑваш наци музейӗнче пулса курма та тӳр килчӗ. Чӑваш Республики ҫинчен тимлӗ итлерӗмӗр, паллӑ ҫынсем пирки интереслине нумай пӗлтӗмӗр. Урӑх халӑх йӑли-йӗркипе те паллашрӑмӑр.

Атӑл хӗрринчен инҫех мар геологи музейӗ пур, кунта ҫӗр пахалӑхӗсемпе паллашрӑмӑр. Алмаз — чи хытӑ чул пулнине пӗлтӗмӗр. Кунта мӗнле кӑна чул ҫук пуль. Кӗрсенех вара мамонтӑн асав шӑлӗсене курма пулать. Музей умӗнчи виҫӗ мӑн чул ҫумне алӑ тӗксе хамӑр ӗмӗте ӑшра каларӑмӑр. Хуларан килнӗ чух Атӑл хӗррипе килтӗмӗр. Шупашкар кунтан асмлӑ курӑнать, хӗрлӗ, сарӑ тӗспе выляса тӑрать.

Ҫак экскурси мана питӗ килӗшрӗ. Тепӗр ҫулне те шкулпа экскурсие килсе курасччӗ.

**Таня СТЕПАНОВА**
**8-мӗш класс,**
**Очӑкасси шкулӗ**

# ХӖЛЛЕХИ КАНИКУЛТА

**Хӗллехи каникул асра юлчӗ. Раштавӑн 30-мӗшӗнче эпир ҫемьепе — анне, пичче, йӑмӑк тата эпӗ — Шупашкара кайрӑмӑр.**

Шупашкарта капӑрлатнӑ елкӑсем нумай. Йывӑҫсене те илемлетнӗ, гирляндӑран тӗрлӗ чӗр чунсем тунӑ. Магазина кӗрсе ҫимӗҫсем илтӗмӗр те вокзала кайрӑмӑр. Билетсем илсе Абашевӑна ҫул тытрӑмӑр. Ҫитсессӗнех асанне пире клуба бал маскарад курма илсе кайрӗ. Бал маскарадри тӗрлӗ конкурссене эпӗ те хутшӑнкаларӑм.

31-мӗшӗнче эпир кукӑльсем, салатсем тата ытти апатҫимӗҫ хатӗрлерӗмӗр. Ҫурҫӗрте Раҫҫей президенчӗ саламне итлерӗмӗр. Кайран магазин патӗнче салют панине пӑхма тухрӑмӑр. Кӳршӗ йытти салют сассинчен хӑраса машин айне тарса пытанчӗ. Кайран пире ни машинӑ патне ямасть, ни хӑй аялтан тухмасть. Пирӗн вара кукамайсем патне ҫуран утма тиврӗ.

Кӑрлачӑн 1-мӗшӗнче эпир киле таврӑнтӑмӑр. Сӑрт ҫинчен ярӑнтӑмӑр, юр пикесем турӑмӑр. Ҫапла хӗллехи каникул иртрӗ.

**Людмила ЯКОВЛЕВА,**
**5 класс, Очӑкасси шкулӗ**

# ИНТЕРЕСЛӖ ҪУЛҪӰРЕВ

**Кӑрлачӑн 10- мӗшӗнче пире, шкул активисчӗсене Шупашкара экскурсие илсе кайрӗҫ. Ҫак чыса 25 ача тивӗҫлӗ пулчӗ.**

Экскурси вара питӗ интереслӗ те усӑллӑ пулчӗ. Эпир хӗллехи Шупашкар илемне курса савӑнтӑмӑр, тӗрлӗрен музейсене кӗрсе курса тӗлӗнтӗмӗр. Чапаев музейӗнче те, Чӑваш наци музейӗнче те курса тӗлӗнмелли нумай пулчӗ, географи музейӗ те, ӳнер музейӗ те ҫав тери килӗшрӗҫ. Экскурсоводсем ӑнланмалла та интереслӗ каласа пачӗҫ. Экскурси йӗркеленсе панӑшӑн хамӑр шкул пуҫлӑхне, класс ертӳҫисене тав тӑватпӑр.

**Женя ДАНИЛОВ, 5 класс**
**Очӑкасси шкулӗ**

# ҪӐЛТӐРСЕМ ПАТНЕ ҪУЛ

***/Малалли. Пуҫламӑшӗ малтанхи номерте/***

Ку мӗнле планета? – интересленчӗ Ваня.

– Мерзимин. Эсир ларӑр, эпӗ часах килӗп. Манӑн кунта ӗҫсем пур-ха, – терӗ те Магретта хӑйӗн асамлӑ туйине илсе алӑк патне уттарчӗ.

– Чим-ха! Эпир санпа пырӑпӑр. Ҫак палламан планетӑна тухса курар-ха, – терӗ Коля.

– Ҫавӑнпа та сирӗн кунта



лармалла,– хытарса каларӗ кушак.

Унтан карап алӑкне усрӗ те урамри ҫулпа утса инҫетри ҫурт хыҫӗнче ҫухалчӗ.

Ҫӑлтӑр карапӗн иллюминаторӗнчен интереслӗ ӳкерчӗк курӑнса тӑрать. Магретта утнӑ ҫулпа пысӑк та илемлӗ аллея, ҫурчӗсем вара... ҫынсен тӗлӗксенче кӑна кураҫҫӗ пуль. Кунта кашни пӑхмассерен илемлӗрен те илемлӗ ҫурт. Ҫак вырӑнта пурӑнакансем питӗ тирпейлӗ. Вӗсем пурте таҫта васкаҫҫӗ. Сасартӑк Коля ҫав ҫынсем хушшинче Ваньӑна курах кайрӗ:

– Ну ку шӑпӑрлана тытсан чӑнах лектеретӗп, – терӗ те ача хӑвӑртрах тухса чупрӗ.– Эй, Ваня! Ӑҫта эс? Кил хӑвӑртрах! Магретта пире тухма хушман!

Ванюк Коля кӑшкӑрнине илтмен, ӑна хаваслӑ та илемлӗ ярмарка илӗртнӗ.

– Акӑ-ха ӑҫта пурте утаҫҫӗ! – чухласа илчӗ Коля хӑй те ҫавӑнталла таплаттарчӗ, Ваньӑна хӑваласа тытрӗ. Сасартӑк вӗсене такам ярса тытрӗ. Ачасем ҫаврӑнса пӑхрӗҫ, курнинчен питӗ хӑраса ӳкрӗҫ.

– Кам эсӗ?– ыйтрӗҫ ачасем.

– Эпӗ-и? – тӗлӗнчӗ ҫын.– Ха-ха, ҫак планета ҫинче мана палламан ҫын ҫук пулӗ? Мана Арабелт тесе чӗнеҫҫӗ, Мерзимин патшин ывӑлӗ эпӗ. Эсир вара камсем?

Коля хурав пама ҫӑварне усрӗ кӑна вӗсем патне Магретта килсе кӗчӗ.

– Мӗн кирлӗ сире вӗсенчен? – тесе ыйтрӗ кушак Арабелтран.

– Чим-ха! Эсӗ Магретта вӗт-ха, Валаси планетинчен!– тӗпчерӗ Арабелт.

– Чӑнах, ҫавӑ. Эсир мана ӑҫтан палларӑр? – тӗлӗнчӗ кушак.

– Астӑватӑр-и, пирӗн патша сире Рабаллак йӑхӗпе кӗрешме пулӑшнӑччӗ. Вӗсем пирӗн ҫине тапӑнсан эсир мана вилӗмрен ҫӑлса хӑварнӑччӗ.

– Арабелт, эсӗ-и ку?– пушшех те тӗлӗнчӗ кушак, унӑн капюшонне хыврӗ.

– Чӑнах, эпӗ.

Туссем татах пӗр-пӗрин ҫине тӗлӗнсе, савӑнса пӑхрӗҫ.

– Магретта, ман сана нумай каласа памалли пур, атя, пӗр-пӗр кафене кӗрсе чей ӗҫсе тухар.

– Чӑнах-та, манӑн та хӑранипе питӗ ҫиес килсе кайрӗ.

Пурте Арабелт хыҫҫӑн утрӗҫ.

**Дима Соколов,**
**9-мӗш класс,**
**Калайкасси шкулӗ**
**(Вӗҫӗ пулать)**